**Волков Г. «Вĕрентекенĕм, халăхăмар аслă...»**

Чăн-чăн сăвăç вилсен те вилмест... Юлашки самантчenex Петр Петрович шухăшлама, ĕмĕтленме пăрахмарĕ. Унăн пултарулăхĕн пуянлăхĕ иксĕлсссĕн туйăнмастчĕ, поэзийĕн таппи вăйсăрланма пултараймасть, теттĕмĕр. Вилме пултарайман çын пекчĕ. Чĕри тапма чарăнicчeнех Хусанкай тăван халăха юратса пурăнчĕ, ун малашлăхĕ çинчен ĕмĕтленчĕ. Ыратнине чăтмалла мар чух та тăван халăх çитĕнĕвĕсем унăн пит-куçне илемлĕ кулăпа çутататчĕç. Сăнĕ темĕнле ăшшăн курăнакан пулатчĕ. Тăван халăха, тăван сăмаха, тăван чĕлхене юлашки хут ассăн сывличченех юрататчĕ Хусанкай.

Юлашки кунсенче те сăвă çырма мехелне çитерчĕ, вăл тупрĕ. Унăн юлашки йĕркисенче те - мал ĕмĕт, ĕненӳ, шанчăк...

Вĕрентекенĕм, халăхăмăр аслă:

Вĕçĕ-хĕррисĕр ăсă ун хевти...

Çак сăмахсене аслă сăвăçăмăрăн тупăкĕ умĕнче тупа вырăнне калама та пулĕ.

Сăвăçăмăр вилчĕ. Пирĕн халăх хăйĕн мухтавлă ывăлне ĕмĕрне те манмĕ. Çакă хуйхăпа хурлăха сирсе ярать, пиртен аяккалла хă-валать.

*Коммунизм ялавĕ. - 1970. - 6 март.*